**Хаçатра çырни патне таврăнса**

# Лайăх пурнăç ĕçлемесĕр пулмасть

Нумаях пулмасть Раççей Президенчĕ Федераци Канашне Çырупа тухрĕ. Унта çĕршыв ертӳçи эпир паян совет саманинче тунă экономика хăвачĕпе пурăннине йышăнчĕ. Анчах мĕн туни вăл вĕçĕмсĕр мар. Мĕн пуррипе тирпейлĕ усă курни, перекете мала кăларни ыранхи кун никĕсĕ пулнине эпир пурте аван ăнланатпăр, анчах... Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен уй-хирĕсене тухсан, выльăх-чĕрлĕх фермисенче пулса курсан, час-часах перекетлĕх ыйтăвĕ иккĕмĕш вырăна юлни курăнать. Çакăн витĕр ыранхи куна пăхма пулать-и? Ку ыйту çине хаçатăн ноябрĕн 21-мĕшĕнче тухнă номерĕнче районти депутатсен Пухăвĕн депутачĕ П. Воробьев «Нивушлĕ никамăн та чунĕ ыратмасть е мĕн патне çитĕпĕр капла пурăнсан» статьяра тулли хурав панă. Анчах çĕр ĕçĕнчи йĕркесĕрлĕхшĕн камăн ответ тытмалла-ха? Кунта пĕр-ик çын ĕçленипе пулмасть.

Анне каласа пани паян та асра. Манăн анне 1906 çулта çуралнă. Октябрьти революци пулнă чух вăл 11 çулхи хĕр ача пулнă. Çавăнпа та çав вăхăтченхи çĕр ĕçченĕн пурнăçне лайăх астăвать. Хальхи вăхăтра телевизорпа çав революциччен пурнăç лайăх пулнă тенине час-часах илтме пулать. Анчах анне каласа панинчен çав лайăха эпĕ кураймарăм.

Манăн кукаçисен улăм витнĕ пĕчĕк çурчĕ хальхи район администрацийĕн вырăнĕнче пулнă. Кукаçи ӳссен, авланма вăхăт çитсен, Оринин ярмăрккине кайса Наçтаç хĕрпе паллашса ăна вăрласа кĕрет. Кукамай тăлăх хĕр ача пулнă. Ашшĕпе амăшĕ выçăллă-тутăллă пурăнса çамрăклах пурнăçран уйрăлнă. Куками пиччĕшĕпе кăна пурăннă. Пĕррехинче нимене кайсан пĕр ăссăртарах çын вылямалла тытнă пăшалпа ăна вилмеллех амантать.

Çапла манăн кукаçипе кукамми çемье çавăрнă. Вĕсен икĕ хĕрпе виçĕ ывăл çуралаççĕ. Ачисем тĕрекленсе çитсен кукаçипе куками пӳрт лартаççĕ. Вăй илнĕ хресчен çемйине курайман пĕр ял çынни вĕсене Сурхури каç тивертсе çунтарса ярать. Çири кĕпе-йĕмпе çеç юлаççĕ вĕсем. Ун чух пушар машини пулман, пулăшу та вăхăтра çитеймен. Кил-çурт тĕпĕ-йĕрĕпе, выльăхĕ-чĕрлĕхĕпе кĕлленет. Инкек тӳсекенсен ял пуянĕ патĕнче ĕçлеме тивет. Çав йывăр вăхăта аса илсе анне час-часах макăратчĕ. Совет влаçĕ пуçлансан, чухăнсем çĕр ĕçĕ çине çĕнĕлле пăхма пуçласан, çĕрпе тухăçлăрах усă курма тытăнсан, пурнăç улшăннине анне мухтатчĕ кăна. «Çак ырăлăха колхозсем илсе килчĕç. Тинех çăкăр ыйтса çӳрекенсем пĕтрĕç», – тетчĕ пурнăç хура-шурне самай курнă анне.

Халĕ вара каллех тĕрлĕ чир-чĕр аталаннă, çĕрсемпе тухăçлă усă курасси пирки маннă тапхăра таврăнатпăр-и? Колхозсене пĕтерчĕç, çĕрсем çум айне пулчĕç, ял халăхĕнчен выльăх пуçтарса йĕркеленĕ фермăсем юхăнчĕç, ялти çын ĕççĕр тăрса юлчĕ. Çамрăксем ĕç шыраса тăван енрен аяккарах та аяккарах кайса пыраççĕ. Вĕсем паян хăйсен ăсталăхĕпе Мускав, Чулхула облаçĕсенче пурăнакансене тĕлĕнтерсе çӳреççĕ. Çав вăхăтрах хамăр енри ял урамĕсем çум айне пулса пыраççĕ, обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисем юхăнаççĕ, халăх ĕçлесе туяннă ял хуçалăх техники ялтан «тарса» пырать. Мĕнле пурăнмалла пенси çулне çывхаракансен? Мĕнле ĕç укçипе пулас пенси йĕркелемелле? Каллех çуклăх вăй илĕ-и? Районта 2-3 колхоз кăна юлчĕ пулас. Вĕсен ертӳçисен те пурнăç йывăрлăхĕсемпе кĕрешсе мĕн чухлĕ вăйхал пĕтет пуль. Эпĕ тĕрĕс калатăп е çук? Çакăн пирки хаçат вулакансем çырса пĕлтерĕç тесе шутлатăп. Ку калаçăва пуçарнă П. Воробьева вара тав тăватăп.

**Владислав СЕРГЕЕВ.**
Çурлатри ялĕ.

**Пурте пĕрле Ача амăшĕн кунне уявларăмăр**

# Чуп тăватăп аллуна, анне!

Çĕршывра иртнĕ ĕмĕрĕн вĕçĕнче вăй илнĕ Аннесен кунне уявласси çулсерен вăй илсе пырать. Çак пулăм усалли кăна мар, ырри те пирĕн пурнăçра хăвартах тарăн тымар яма пултарнине çирĕплетет. Амăшсене ятарласа чысласси пĕлтерĕшлĕ уява çаврăннине иртнĕ шăмат кун Çатракасси ял библиотекинче иртнĕ тĕл пулу та çирĕплетрĕ.

Ял библиотекарĕ Вена Петровна Конузина тимленипе çак кун 5-6 е ытларах ача çуратнисем тĕл пулчĕç. Вĕсене Çатракасси шкулĕнче 4-мĕш класра вĕренекенсем ăшшăн саламларĕç. Унта пынисем, тĕпрен илсен, йăлтах «Свобода» хуçалăхра ĕçленĕрен, тĕл пулу та Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕн сĕмĕпе иртрĕ. Е. Романова (8 ача амăшĕ), Е. Филиппова (6), И. Шапошникова (6), Г. Никитина (6), тата 5 ача амăшĕсем Г. Иванова, З. Иванова, Р. Соловьева, Р. Любимова, Е. Донскова, пĕр ача çуратса тата çĕршер ачана вулама-шутлама вĕрентсе пурнăç çулĕ çине кăларнă вĕрентӳ ĕçĕн отличникĕ Т. Донскова тата çак ялта çуралса ӳссе Ĕç Геройĕ ята тивĕçнĕ О. Федорова, Çатракассинчи вăтам шкулта 4-мĕш классене вĕрентекен тата Ача амăш-героиньăн Степанида Ивановна Михайлован несĕлĕ С. Федорова ачаамăш кун-çулне нумай енлĕ аса илчĕç. Пухăннисем С. Федорова хатĕрленĕ Ача амăш-героиня Степанида Ивановна Михайлова пирки презентаци пăхса савăнчĕç. 10 ача çуратса пăхса ӳстернĕ чăваш хĕрарăмĕн кашни ачи çĕршыва юрăхлă çын пулнă. Вĕсенчен 5-шĕ аслă пĕлӳ илме пултарни те амăшĕн тăрăшулăхне кăтартать.

– Анне ялан ăслă-тăнлă пулса пурнăç çулĕпе малалла кайма хистенивĕрентни паян та асра. Тавах ăна çакăншăн, – терĕ амăшĕ пирки кĕске калаçура тĕл пулăва килнĕ кĕçĕн ывăлĕ Григорий.

Амăшĕсем хăйсен уявне çăкăр-тăварпа тулли сĕтел хушшинче паллă турĕç. «Сирĕн ачăрсемпе мăнукăрсем – хăйсем сĕтел пуянлăхĕ. Вĕсемпе эсир мухтанма тивĕç», – терĕ амăшĕсене саламланă май Ĕç Геройĕ О. Федорова.

Р. Соловьева амăшĕсене халалласа вуланă сăвă та уяв сĕмне пуянлатрĕ кăна.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**




**Тĕл пулăва пынă амăшĕсен куçĕсенче йышлă ачисемпе тата мăнукĕсемпе савăнни кашни сăмах хыççăнах палăрчĕ.**



**4-мĕш классен сăвви-юррисем амăшĕсемшĕн телей парнисем пулчĕç. Пĕчĕк концертшăн кашни ача тав сăмахне тивĕçрĕ.**



**Ача амăш-героиньăн Степанида Ивановна Михайлован тăсăмĕсем: С. Федорова, героиньăн кĕçĕн ывăлĕ Григорий, В. Никитин. Ку вăл пысăк йышăн пĕчĕк пайĕ кăна. Шутланă тăрăх çак ăрура 10 ачасăр пуçне 29 мăнук, 51 прамăнук тата прамăнуксен 12 ачи.**




**Библиотекăра тăтăшах савăнăçлă мероприятисем ирттерекен В. Конузина Г. Никитинана 6 ача çуратса ӳстернĕ ятпа Çатракасси ял тăрăхĕн Тав çырăвне пачĕ. «6 ача – кашни хăйне евĕр телей», – терĕ Галина Александровна савăнăç шевлине пытараймасăр.**

**Район прокуратуринчен**

# Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

***Паянхи рубрикăна район прокурорĕн пулăшаканĕ Екатерина Николаевна КУЗЬМИНА ертсе пырать.***

## Ачасемшĕн – пособисем

**Ача çуратнă хыççăн ăна пăхма уйăхсерен тӳлекен пособипе тăхтав тума юрать-и тата çакă тĕрĕс-и?**

**«Свобода» хуçалăх ĕçченĕсем.**

«Раççей Федерацийĕнчи ача прависен тĕп гарантийĕсем çинчен» Федераллă Саккунпа килĕшӳллĕн ачасен интересĕсем тĕлĕшпе пăхнă патшалăх политики приоритетлă шутланать. Çав гарантисем «Ача пур граждансене патшалăх пособийĕсем парасси çинчен» Федераллă Саккунран, РФ Правительствин 2006 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнчи 865-мĕш номерлĕ «Ача пур граждансене патшалăх пособийĕсем шутласа парасси тата тӳлессин положенине çирĕплетесси çинчен» Постановленийĕнчен тухса тăраççĕ.

Асăннă çырупа иртнĕ кунсенче «Свобода» тата «Герой» хуçалăхсене тĕрĕслерĕмĕр. «Свобода» хуçалăхра вăл пособисен виçи октябрь уйăхĕшĕн 65 пин тенкĕ, «Герой» хуçалăхра 2 ĕçчен умĕнчи парăм 11 пин тенкĕ пулни палăрчĕ.

Прокуратура хушша-хуппа кĕнипе çитменлĕхсене пĕтернĕ.

## Милици çамрăксем тĕлĕшпе

**Çул çитмен çамрăксене милицине тытса кайни яланах саккунлă-и? Е хирĕç чĕнеймен çамрăксемпе темĕн тума та юрать-и?**

**В. КРУГЛОВ.**

Çакăн пек ыйтусемпе пирĕн патăмăра час-часах килеççĕ. Çакна шута илсе нумаях пулмасть шалти ĕçсен пайĕнче ĕçлекенсем çул çитмен çамрăксене тытса шалти ĕçсен пайне илсе пынă çĕрте саккунлăха пăхăннине тĕрĕслерĕмĕр. Тĕрĕслевре çул çитмен çамрăксене шалти ĕçсен пайне илсе пынă чух саккуна пăснă тĕслĕхсем те çиеле тухрĕç: «япăх поведенишĕн», «уроксем сиктернĕшĕн», «ыйтса пĕлме», çамрăксене шалти ĕçсен пайĕнче 3 сехет ытла тытни.

Район прокурорĕ çак çитменлĕхсене пĕтерме хушса тата ку тĕлĕшпе йĕрке пăснисене явап тыттарма ыйтса шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ ячĕпе представлени тăратнă.

## Çĕрпе тĕллевлĕ усă курасси

**Паян ял хуçалăх çĕрĕсем çум айне пулнипе пĕрлех ăçта кирлĕ унта тĕрлĕ ăпăр-тапăр тăкса тултарнипе те хăтлăха çухатрĕç. Çакăн çине ял тăрăхĕсем те пӳрне витĕр пăхаççĕ. Мĕн патне пырăпăр капла? Район прокуратури ял тăрăхĕсенче çĕрпе усă курнине тĕрĕслет-и? Явап тытнă пуçлăхсем пур-и?**

**И. СОЛОВЬЕВ, А. АСТРАХАНЦЕВ.**

Çĕрпе тĕллевлĕ усă курасси – паян кун йĕркинче тăракан тĕп ыйтусенчен пĕри. Ивановкăра тĕрлĕ ăпăр-тапăр пухмалли полигона хута ярсан ялсенче тирпей-илем ытларах пуласса шанас килет. Анчах çакă паян ответлă пулмасан та юрать тенине пĕлтермест. Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе ял тăрăхĕсенче епле усă курнине эпир хамăр енчен пăхса-тĕрĕслесех тăратпăр.

Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе килĕшӳллĕн кашнийĕнех таса та тирпейлĕ тăван тавралăхпа усă курма, унăн ытамĕнче канма право пур. Çакăнпа пĕрлех Конституцире пурин те çут çанталăкпа тăван тавралăха сыхламалли пирки, çут çанталăк пуянлăхĕпе тирпейлĕ пулмалли çинчен, çакă Раççей Федерацийĕн территорийĕнчи халăх пурнăçĕн тăнăç аталанăвĕн никĕсĕ пулнине палăртнă.

«Тăван тавралăх сыхлавĕ çинчен» Федераллă Саккунăн 51-мĕш статйипе килĕшӳллĕн производство каяшĕсене вĕсен хуçисем пĕр çĕре пухса тавралăха сиен тумасăр пытарма тивĕç.

Çĕр кодексĕпе çĕре тăван тавралăхăн тĕп компоненчĕ тата ял хуçалăхĕн производство хатĕрĕ тесе палăртнă.

Çĕрсене упрас тĕллевпе çĕр участокĕсен хуçисен ятарлă ĕçсем туса ирттерессинчен те пăрăнмалла мар: химилле препаратсемпе тата хатĕрсемпе, производствăпа йăла каяшĕсемпе вараласран тăтăшах сыхланмалла.

Çĕр хуçисен çĕр участокĕсемпе вĕсене мĕн тĕллевпе илнине кура усă курмалла. Усă курнă чух тăван тавралăха тата çĕр пахалăхне сыхлассине малта тытмалла.

Район прокуратури кăçалхи октябрь уйăхĕнче Чăваш Республикинчи фитосанитарипе ветеринари надзорĕн Федераллă служба Управленийĕн çĕр тĕрĕслев пайĕн инспекторĕпе РФ çĕр законодательствине Катькас тата Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсенче епле пăхăннине тĕрĕслерĕмĕр.

Тĕрĕслевре ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсем çинче йăла тата строительство каяшĕсемпе тултарнă санкцилемен вырăнсем куç тĕлне пулчĕç. Çапла вара çĕрсемпе тĕллевлĕ усă курманшăн асăннă ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен административлă майпа явап тытма тиврĕ.

## Алă çĕкленĕ çеç мар...

**Ача çуратма хатĕрленекен хĕрарăм çине алă çĕкленĕшĕн суд пулать тетчĕç. Пĕлес килет, мĕнпе вĕçленчĕ-ши çак уголовнăй ĕç?**

**О. ТАРАСОВА.**

Çапла, пирĕн практикăра кунашкал ĕç те пулса иртрĕ. 2009 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнче В.Б. Иванов тĕлĕшпе Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 112 статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление тунăшăн район сучĕ приговор кăларчĕ. Хăйсем хушшинчи хирĕçĕве пула В.Б. Иванов 6 уйăхри йывăр хĕрарăма, арăмне, ыраттарас шутпах пуçран тата алăсенчен çапса пĕтернĕ, пӳрнине хуçнă.

Çемьере пĕчĕк ача пуррине тата вырăнтан килĕшӳллĕ характеристика панине кура миравай судья приговорĕпе В.Б. Иванова пĕр çулталăк та 4 уйăха ирĕкрен хăтарассине пĕр çулталăк та 6 уйăха условнăй айăплавпа ылмаштарнă.